**Саламлатпăр**

Пирĕн юратнă, чи хаклă çыннăмăра, аннене, асаннене, кукамая, хунямана – Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Варвара Андреевна ПЕТРОВĂНА** юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă та ырă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, куç тулли телей, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăварпа, кĕрекӳ юратнă тăвансемпе тулли пултăр. Умра ырă та çутă кунсем кăна пулччăр. Тавах сана ĕçпе те, тĕрĕс сăмахпа та яланах пире пулăшса тăнăшăн, ăнланнăшăн, юратса çитĕнтернĕшĕн. Малашне те тăван кил ăшшине упрама Турă иксĕлми вăй-хал патăрччĕ сана.



**Саламлаканĕсем: ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем.**

Пирĕн хаклă çыннăмăра – Актай ялĕнче пурăнакан **Алевтина Леонидовна АЛЕКСАНДРОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Сана юрататпăр, хисеплетпĕр, умра ырă та çутă кунсем кăна пулччăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн.



**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, Алексеевсем, Башмаковсем, Варламовсем.**

**Театр çулталăкĕ**

# Ачасем спектакль пăхаççĕ

«Театральное Приволжье» фестивальте кăтартнă шкул тата студентсен спектаклĕсене Чăваш Енри Культура çурчĕсемпе библиотекисенче кăтартма тытăнчĕç. Фестивалĕн регионти çĕнтерӳçисем – «Наброски судьбы» тата «Мой дедушка был вишней» спектакльсем.

Иртнĕ кунсенче Ильинка ял библиотекинче акă «Наброски судьбы» спектаклĕн видеоверсине кăтартнă. Унпа вырăнти шкулта 7 класра вĕренекенсем паллашнă.

Çак спектакль актерĕсем – Шупашкарти 4-мĕш лицейри сцена искусствин студине çӳрекенсем. Премьера хыççăн вĕсем хăйсен шухăш-кăмăлĕпе паллаштарнă.

Каласа хăвармалла, «Театральное Приволжье» проектăн çĕнтерӳçĕ-спектаклĕсемпе проектăн сайтĕнче (http://театральноеприволжье.рф/) паллашма пулать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Республикăра**

# Кадетсен спартакиади

**Атăлçи федераци округĕнчи кадет корпусĕсен «Кадет Приволжья» тăваттăмĕш спартакиади Шупашкарта октябрĕн 10 – 14-мĕшĕсенче иртет. Ăна Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов ячĕллĕ чăваш кадет корпусĕнче йĕркелеççĕ.**

Спартакиада Раççей Президентĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Игорь Комаров пулăшса пынипе «КаДетство» проект шайĕнче иртет.

Спартакиадăна кадет вĕрентĕвĕпе воспитани тытăмне анлăрах сарас тата аслă классенче вĕренекен кадетсен хатĕрленĕвне тĕрĕслес тесе йĕркелеççĕ. Çавна май спартакидăна Атăлçи тăрăхĕнчиултă кадет корпусĕн 10 – 11 классенчи кадечĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсем хăйсен ăс-тăнĕпе пĕлĕвне, спорт тата çар хатĕрленĕвне, тĕрлĕ пултарулăхне конкурссемпе ăмăртусенче тĕрĕслĕç.

**Хамăр инф.**

**Наци проекчĕ**

# Хушма вĕренӳ – сертификатпа

**Чăваш Республикинче çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен тытăнса ачасен хушма вĕренĕвĕн регион системине аталантарса тĕллевлĕ ĕçне пурнăçа кĕртессин шайĕнче персонифицированнăй финансласси çине куçса пыраççĕ. Хушма вĕренĕвĕн навигаторĕпе учреждениесем иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Сертификатпа 5 çултан пуçласа 18 çулчченхи ачасем усă курма пултараççĕ. Çак ĕçе йĕркелессине РФ Президенчĕн май уйăхĕнчи указĕнче тата «Образование» наци проекчĕн «Успех каждого ребенка» федераци проекчĕн паспортĕнче палăртнă. Вĕсенче шăпах та çӳлерех асăннă ӳсĕмри ачасене хушма вĕренĕве 80 процент чухлĕ явăçтарма тĕллев лартнă.**

Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, районта çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче çак ӳсĕмри ачасене хушма вĕренӳ процесне явăçтарассин шайĕ 77 процентран кая пулмалла мар, районта пĕтĕмпе 968 ача персонифицированнăй сертификатлă пулĕ. Енчен те ашшĕ-амăшĕ навигаторта регистрациленме ĕлкĕреймен пулсан, ача малтанхи пекех кăмăл тунă тӳлевлĕ е тӳлевсĕр кружоксемпе секцисене çӳреме пултарĕ.

Навигатора лицензиллĕ учрежденисен программисене кăна кĕртнĕ. Пирĕн районта хушма вĕренĕвĕн лицензиллĕ тăватă учрежденийĕ ĕçлет: ачасен Ф. Васильев ячĕллĕ искусство шкулĕ, çамрăк техниксен станцийĕ, ачасен пултарулăх çурчĕ тата «Сывлăх» спорт шкулĕ. Çамрăк техниксен станцийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, асăннă учреждени валли сертификата ытларах уйăрнă, вĕсем урлă 383 ача сертификатлă пулĕ.

Асăннă учреждени ĕçченĕсем çĕнĕ мел вăя кĕртессипе тĕплĕн паллаштарчĕç. Кашни ача çемье тупăшне пăхмасăрах хăй кăмăллакан кружоксемпе секцисене çӳреме пултарĕ, пĕлӳ памалли укçа-тенкĕне патшалăх уйăрса парĕ. Хушма вĕренӳ хăш ведомствăна (вĕренӳ, спорт, культура тата ытти) çыхăннине пăхмасăр программăсен пĕрлехи базине йĕркеленĕ. Сертификатпа финансласси çавăн пекех хушма вĕренӳри мĕнпур кăтартăва онлайн мелпе курса, пĕлсе тата тĕрĕслесе тăрассипе те çыхăннă.

Ашшĕ-амăшĕн «Навигатор дополнительного образования» (https://р21.навигатор.дети) сайтри каталогра кружока, секцие суйласа илмелле те регистрациленмелле. Çакăн хыççăн ача ячĕпе «не подтвержден» статуслă электронлă сертификат тухать. Сертификата ашшĕ-амăшĕн ача кружока çӳрекен учреждение паспортпа тата ачан документĕпе кайса çирĕплетмелле, килĕшӳ тумалла. Енчен те сертификата тĕрлĕ сăлтава пула ашшĕ-амăшĕ регистрацилеймест пулсан та учреждение каймалла. Кружока çӳрекен ачан сертификат пуррипе çуккине учреждени электрон мелĕпе тĕрĕслет. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ август уйăхĕнче регистрациленме тытăннă. Пĕр ачана пĕр сертификат параççĕ. Сертификатра мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ юлнине регистрациленнĕ сайтра пăхмалла, вăл харпăр хăйĕн кабинетĕнче упранать. Ку вăл ачана алла илмелли укçа мар.

Енчен те ачан вăл е ку района куçса каймалла пулсан, вăл унччен усă курнă сертификата хăварать, çĕнĕ вырăнта урăххине илет. Кашни районта сертификат номиналĕ тĕрлĕрен. Муркаш районĕнче çак çул вĕçлениччен – декабрьченех хак 3 пин те 600 тенкĕпе танлашать. Ку виçе учреждени ача вĕренĕвĕ валли мĕн чухлĕ тăкакланнипе, коммуналлă тӳлевсемпе тата ыттипе çыхăннă. Ача кружока çӳренипе кашни уйăхра сертификат çинчи укçа каталса пырать. Электрон çырăну ача 18 çула çитиччен юлать. Çемьери пĕр ачан сертификачĕпе тепри усă кураймасть. Енчен те тĕрлĕ сăлтава пула ача кружока çӳреме пăрахать пулсан, ашшĕ-амăшĕ учреждение кайса заявлени çырать.

Кружок е секци уйрăм çыннăн та пулма пултарать. Патшалăх вĕсенче те хушма пĕлӳ илме май туса парать, енчен те уйрăм çын ятарлă лицензи илнĕ тата порталта регистрациленнĕ пулсан. Патшалăхăн тĕп условийĕ – алăра лицензи пулни, çавăн пекех программа пахалăхне хакланин процедури витĕр тухни.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Çамрăк журналист**

# «Артекра» пулни манăçа тухмĕ



**Кăçалхи февраль уйăхĕнчен тытăнса Чăваш Республикинче пĕтĕм Раççей шайĕнче анлă калăпăшлă «Сделаем вместе!» акцисем иртрĕç. Вĕсенчен пĕри – «Русский Крым и Севастополь» акци. Асăннă акци шайĕнчи «Лидер» конкурса Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти добровол Степан Борзаев та хутшăннă. Вăл хăйĕн кураторĕ Наталия Борзаева ертсе пынипе тата унпа пĕр шухăшлисен команди пулăшса пынипе мăстăр-классем, экскурсисем, интереслĕ çынсемпе çавра сĕтелсем сахал мар ирттернĕ.**

Акци пĕтĕмлетĕвĕпе çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи чи маттур 50 шкул ачи ачасен Крымри халăхсем хушшинчи «Артек» центрĕнче тӳлевсĕр канма путевкăна тивĕçнĕ. Вăл шутра Чăваш Республикинчен 2 лидер: Канаш хулинчен Мария Федотова тата пирĕн районти Шурча шкулĕнчен Степан Борзаев.

«Унччен эпĕ Крым çурутравĕ çинче нихăçан та пулса курман. Çапах та унăн историне питĕ лайăх пĕлетĕп. Манăн тахçанах унта пулса курас килетчĕ, унти паллă вырăнсене, ку тăрăхри юмахри пек çут çанталăкпа хам куçпа курса çывăхарах паллашас килетчĕ. Шăпах çав тĕллевпе хутшăнас терĕм те ĕнтĕ эпĕ ку конкурса. Конкурсăн федераци шайĕнчи тапхăрĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăтăм.

«Единая Россия» парти проекчĕпе Крымри халăхсем хушшинчи ачасен «Артек» центрне кайма 10-мĕш сменăна тӳлевсĕр путевкăна тивĕçрĕм. Эпĕ «Янтарный» лагерĕн питĕ интереслĕ «Бесконечное множество» сменинчи КВН отрядне лекрĕм. Лагерьте 3 эрне пулни нихăçан та асран тухас çук. Кунтах КВН хăнăхăвĕсене алла илтĕм. Пирĕн лагерь, шăпах пирĕн отряд «Артек» лагерьти ытти отряд хушшинче пĕтĕмĕшле КВН вăййинче мала тухма пултарчĕ. Чи пĕлтерĕшли вара маншăн – халĕ манăн юлташсем пĕтĕм çĕршывĕпех пурри», – каласа парать Степан Борзаев. Степан хăйне пулăшса пынăшăн пĕтĕм шкула, района тата «Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи регион уйрăмне тав сăмахĕ калать.

«Хамăр ĕçсемпе конкурс комиссине интереслентерме тата пиншер участника кая хăварма çăмăлах пулмарĕ. Çапах та çине тăни сая каймарĕ. Мĕнпĕн тесен эпир туслă командăпа ĕçлерĕмĕр», – палăртать Н.В. Борзаева куратор. Сăмах май, асăннă акци шайĕнчи «Плакат» конкурсра та Шурча шкулĕнче вĕренекен Димитрий Терехин регион тапхăрĕн çĕнтерӳçи пулса тăнă, парнене тивĕçнĕ.

Аса илтересшĕн. «Сделаем вместе!» акци шайĕнчи «Лидер» конкурс кăçалхи февралĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса июнĕн 30-мĕшĕччен пынă. Конкурс комиссийĕ Раççей тата Крым историйĕсене чи лайăх пĕлекенсене палăртнă. «Русский Крым и Севастополь» – пĕтĕм Раççей социаллă акцийĕ. Унăн задачи – Раççей тата пĕчĕк Тăван çĕршыв историне типтерлĕн сыхласа упрасси, çавăн пекех шкул ачисем хушшинче патриот воспитанине аталантарасси.

**Зоя ДИПЛОМАТОВА, район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи:**

– «Вĕренӳ» наци проекчĕ шайĕнчи «Социальная активность» регион проекчĕн пĕлтерĕшлĕ задачи вăл – обществăлла пусăрулăха тата проектсене пулăшса пынă май, добровольчество (волонтерство) юхăмне çул парасси, ачасемпе çамрăксен пултарулăх майĕсемпе ăс-тăнне аталантарасси. 2024 çул тĕлне граждансен 15 процентне добровольчество (волонтерство) юхăмне явăçтармалла, çамрăксен 45 процентне – пултарулăх ĕçне-хĕлне. Районти 21 вĕренӳ организацийĕнче паян добровольцесен 81 команди ĕçлет, вĕсенче 1300 волонтер тупланать. Районта çамрăксемпе ĕçлеме 4 учреждение палăртнă. Вĕсемех волонтер площадкисем пулса тăраççĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: «Артекра».**

**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе тухать.**

**Статистика**

# Тишкерӳ ирттереççĕ

**Росстат 2013 çултанпа çынсем компьютер техникипе тата Интернетпа мĕнле усă курнине палăртма суйласа илнĕ вырăнсенче тишкерӳ ирттерет. Кăçал кун пек сăнавлă тишкерӳсене икĕ хутчен – октябрĕн 14 – 24-мĕшĕсенче тата ноябрĕн 11 – 17-мĕшĕсенче ирттерме палăртнă. Вĕсене Раççейре пурăнакан 32 пине яхăн çемье хутшăнмалла.**

Тишкерӳ ирттерме пирĕн республикăра Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Çĕмĕрле, Канаш, Сĕнтĕрвăрри хулисене тата Элĕк, Патăрьел, Вăрнар, Канаш, Красноармейски, Муркаш, Пăрачкав, Вăрмар, Елчĕк районĕсене суйласа илнĕ.

Ыйтăма килти хуçалăхра пурăнакансенчен 15 çултан аслăраххисем пурте хутшăнаççĕ. Хуравсем тĕрĕс пулнине нимĕнле документпа та çирĕплетме кирлĕ мар.

Тишкерӳ ирттерсе илнĕ хуравсене никама та пĕлтермеççĕ, вĕсем анонимлă шутланаççĕ. Хуравсемпе пĕтĕмлетӳсем туса статистика даннăйĕсене хатĕрлеме кăна усă кураççĕ. Кайран пĕтĕмлетнĕ кăтартусене Росстат централизациленĕ майпа хăйĕн сайтĕнче вырнаçтарать. Ку даннăйсем Росстат сайтĕнче (www.gks.ru) 2020 çулхи март уйăхĕнче пуриншĕн те усă пулĕç.

**Сăмах май. 2018 çулхи октябрь – ноябрь уйăхĕсенче Чăвашстат тишкерӳ ирттернĕ тăрăх, Чăваш Республикинче 15 çултан аслăраххисенчен 74 процентĕ Интернета тухма пултарнă, 95 проценчĕ Интернетпа килте, 46 проценчĕ ĕçре, 33 проценчĕ юлташĕсем патĕнче, 12 проценчĕ вĕреннĕ çĕрте, 9 проценчĕ обществăлла ятарлă вырăнта, 3 проценчĕ библиотекăсенче усă курнă.**

**Чăвашстатăн пресс-службы.**